Чăваш Республикинчи Патăрьел муниципаллă округĕн «Турханти «Çеçпĕл» ача сачĕ» муниципалитетăн шкул умĕнхи вĕренӳ бюджет учрежденийĕ

**«Йăва»**
**йăвалавпа иртермелли вĕрентӳллĕ вăйă конспекче**
**2- мĕш кĕçĕн ушкăнра**

Узюкина Алиса Васильевна
воситатель хатĕрленĕ

Турхан ялĕ-2023

***Тĕллевсем:***

Пластилин татăкĕсене ал тупанĕсем хушшине унаса çаврака япаласем тума пĕлнине малалла аталантарасси; çавра формăллă япаласене тупма тата уйăрса илме вĕрентесси, вырăс халăх юмахĕсем тăрăх япаласем тума вĕрентесси ; юмахри персонажсене чĕнме хистемелле, юмахри геройсене ырă сунса пăхма вĕрентмелле, ачасен кĕлеткесем йăваласа тăвас кăмăлне аталантарасси.

***Малтан туса irттернĕ ĕçсем:***

- «Йăва» вырăс халăх юмахне вулани;
- ачасемпе ӳкерчĕксем пăхни.

***Меслетсемпе мелсем:***

- вăййă мелĕ, вăййă ситуацийĕ;
- художество сăмахĕ;
- куçăмлă меслет.

***Усă курмалли хатĕрсем:***

- Йăва тетте;
- сарă тĕслĕ пластилин;
- куç-çăвар патакĕсем;
- хăма татăкĕсем;
- алăсем валли салфеткăсем.

***Вăййă юхăмĕ:***

*Воспитатель ачасене йăва юррине итлетерет.*

Ачасем, илтетĕр-и пирĕн пата хăнаваскать. (Воспитатель чăрăш хыçĕнчен Йăва йăтса тухать).

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, паян пирĕн пата юмахри персонаж килчĕ ăна мĕн тесе чĕнеççĕ?

А ч а с е м: Йăва.

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, атьăр-ха Йăвана сывлăх сунар. (ачасем йăвана сывлăх сунаççĕ).

Й ă в а: Ырă кун пултăр, ачасем.

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, пăхăр-ха, мĕнле вăл? ( Йăвана кашни ача патне илсе пырать).

Ачасем: çемçе, ăшă, çаврака.

В о с п и т а т е л ь: Мĕн тĕслĕ вăл?

Çапла, сарă тĕслĕ.

Физкультура вăййи:

"Вăрманти тискер чĕр- чунсем юрлани"кĕвĕ .

- Ачасем, вăрманта мĕнле тискер кайăксем тĕл пулчĕç?

В о с п и т а т е л ь: Мулкач мĕнле сикет?

В о с п и т а т е л ь:Кашкăр мĕнле улать?

В о с п и т а т е л ь: Упа мĕнле çӳрет?

В о с п и т а т е л ь: Тилĕ мĕнле çӳрет?

*Ачасем чĕр- чунсем пек çӳресе кăтартаççĕ .*

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, пăхăр-ха! Темшĕн пирĕн Йăва тунсăхласа çитрĕ! Мĕн пулчĕ сана?

Й ă в а: Ачасем, эсир питĕ нумайăн, пурте питĕ туслă, сире питĕ савăнăçлă, эпĕ вара пĕччен, манăн туссем нумай пулнă пулсан, эпĕ те хаваслăрах пулнă пулăттăм.

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, Йăвана туссем тупма пулăшатпăр -и? Эпир вĕсене пластилинран тăватпăр.

*Ачасем сĕтелсем хушшине кĕрсе лараççĕ.*

*Воспитатель ачасене Йăва кăтартать, Йăва тĕсне, формине тепĕр хут асăрхаттарать.*

В о с п и т а т е л ь: Пирĕн алăсем лайăх çыпăçтарчĕр тесен, пирĕн пӳрнесем валли гимнастика тумалла.

Чуста çăртăмăр

Ак çапла, ак çапла (аллисене чăмăртаççĕ)

Йăваа пĕçертĕмĕр

Ак çапла, ак çапла (шар хусканăвĕсене палăртаççĕ).

В о с п и т а т е л ь: Ачасем, халĕ пăхăр-ха, эпĕ Йăвана мĕнле йăваларăм?

В о с п и т а т е л ь: Малтан пирĕн пластилина çемçетмелле. Халĕ эпĕ çавăн пек çемçе пластилинран Йăва тума пултаратăп. Эпĕ пластилинăн сарă чăмăрккине илетĕп, ăна ывăç тупанĕ çине хуратăп, тепĕр ывăç тупанĕпе чăмăртатăп та, шара ярăнтарнă пек, çаврашка хусканусемпе ярăнтарса ятăп.

*Кăтарту хыççăн ачасем хăйсем тĕллĕн Йăва тăваççĕ, пластилина çемçетеççĕ те ăна алтупанĕсемпе çаврашкасемпе йăвалаççĕ.*

*Воспитатель ачасене пулăшать, йăвалав мелне тĕрĕс усă курнине сăнать.*

*Ачасем Йăвана унаса хурсан, воспитатель ачасене патакпа мĕнле куç тумалине тата çăварне мĕнле ӳкерме май пуррине кăтартать.*

Воспитатель. Маттур, ачасем, эсир лайăх тăрăшса ĕçлерĕр! Йăва, пăхха, мĕн чухлĕ туссем санăн, вĕсем те сан пекех сарă, çаврака та савăнăçлă. Халĕ сана кичем пулмасть!

Тавах, ачасем, пулăшнăшăн! Маттур эсир!